Кружок руководительĕсемпе клубра вăçĕ хутчен семинар иртерĕç. Клуб Аслă Социализмăпа революцин 20 çул тултарнă уйăва хатĕрленет. „Кому на Руси жить было хорошо" темăна вечĕр тунă. Ку вечĕрта илемлĕ произведенисемпе усă курнă, инсценировкăсем вырăса панă. Вăтă рабочисем вечĕрта хăйсен ĕлĕкхи асаплă пурнăçĕ çинчен, 1-мĕш Государственă Думине „суйланă" çинчен каласа кăтартнă.

Клубри агитколлектива 60 çынна ситемре хатĕрленеççĕ. Уйăх тĕлне рядноузĕл усăççĕ.

Совет çĕршывĕн мĕн пур ĕççыщисемпе пĕрле Хĕрăç çар боецĕсемпе командирĕсем ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленеççĕ.

Укçăлăк çинче: Киргизинчи территориллĕ кавалери полкĕнчи политрук Шрыкан Тлеуов боецсене çĕнĕ суйлав саккунĕ çинчен йăлантарать.

С. Фридъланд фото-укçăлăкĕ (Сойузфото).

Галкин опытник ĕçĕсем

Кораккасси йăлĕнчи (Елĕк р.) „Хорăн суч" колхоз бригадирĕ И. Галкин йулташ кăçал пысăк тухăçлă вăлăх кашнинĕ туса илес тĕлĕшпе тăрашса ĕçлерĕ. Вăл тĕрлĕ опытсем туса пăхса, йепле майсемпе пысăк тухăçлă вăлăх кашнинĕ туса илме пулассине палăртрĕ.

Кашнин акма çĕр çăласа илнĕ кунран пуçласа кашни куллен мĕнле ĕçсем туса ирттернине журнал çине çырса пынă вăл.

Пысăк тухăçлă вăлăх кашнинĕ туса илес тĕлĕшпе опытсем туса пăхма çăласа илнĕ çĕре малтан апрелĕн 14-мĕшĕнче 8 сантиметр тарăнăшĕ сухалана, 4 хут çÿренĕ; унтан иккĕмĕш хут апрелĕн 17-мĕшĕнче 12 сантиметр тарăнăшĕ сухаланă, 4 хут çÿренĕ; виççĕмĕш хут апрелĕн 20-мĕшĕнче 20 сантиметр тарăнăшĕ сухалана, сухалана хыççăнах пĕрремĕш участкăсене силвинит 1,5 центнер, иккĕмĕш участкăсене суперфосфат 1,5 центнер тата виçĕмĕш участкăсене кĕл 1,5 центнер сапса 4 хут çÿренĕ. Çак ĕçсене тунă хыççăн апрелĕн 25-мĕшĕнче çав çĕре тарах теперн хут 23-сантиметр тарăнăшĕ сухаланă, 4 хут çÿренĕ, вара çав кунах, алăпа лартма çĕре 4 сантиметр тарăнăшĕ лупашка туса окучникне чĕрсе тухнă. Чĕрсе тухнă лупашкасем хушшине 15 сантиметр сарлакăшĕ тунă, çав чĕрсе тухнă лупашкасем çине-выльăх кăшманĕ вăрринех кашни 10 сантиметр хушшине пĕрер пĕрчĕ пăрахса тухнă.

Выльăх кăшманне акнă хыççăн, пур участкăсене çине те пĕр пек навус шывĕ сапса тухнă. Майăн 4-мĕшĕнче, кăшман шăтса тухма пуçланă кун, каллех пур участкăсем çине те пĕр пек чăх тислĕкĕ шĕвĕсене сапнă тата 400 витре шыв çине 50 килограм аммони селитри йăрса ирĕлтернĕ шевекпе шăварнă. Майăн 25 мĕшĕнче анчах шăтма пуçланă çумкурăкĕсене çывĕч кĕрçепе касса тухнă, çĕрне те çемçетнĕ. Майăн 30-мĕшĕнче çăра выртăнти кăшман тĕпĕсене кусарса сайралатса лартнă. Пĕтĕмпе 3 хутчен купаланă: пĕрремĕшне майăн 15 мĕшĕнче—4 сантиметр хулăнăшĕ; иккĕмĕшне июнĕн 1-мĕшĕнче—10 сантиметр хулăнăшĕ; виççĕмĕшне июнĕн 15 мĕшĕнче 15 сантиметр хулăнăшĕ купаланă.

Çапла ĕçлесе тунă кăшмана пур участкăсем çинче те октăбĕрĕн 6-мĕшĕнче пуçтарса кĕртнĕ.

Выльăх кăшманĕ кашни участкăран тĕрлĕ тухнă. Пĕрремĕш участкăран силвинит тăкнă выртăнтан, 130 центнер, иккĕмĕш участкăран, суперфосфат тăкнă выртăнтан, 93 центнер, виççĕмĕш участкăран, кĕл тăкнă выртăнтан—107 центнер тухнă.

Çапла ĕнтĕ силвинит тăкнă выртăнтан ытларах тухнă.—Ун чухлĕ кăшман епĕр нихăçан та туса илмен,—тет Галкин опытник.

Пысăк тухăçлă вăлăх кăшманĕ туса илес тĕлĕшпе опытсем тунă çĕрте Й. Макарова, А. Трофимова, М. Иванова тата В. Никитина колхозницăсем пĕр уйăлмасăр стахановла ĕçленĕ. Вĕсем кулленех ĕç нормисене йăлан ытлашшине тултарса пынă.

Ф. Филипов.

Суккăрсем суйлав саккунне вĕренеççĕ

Пире „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцинчен „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕрентме йăлсовет председателĕне хушни çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Вара епĕ йăлсовет председателĕпе курса калаçрăм та, вăл ман сăмахпа килĕшрĕ. Халĕ Çеренкасси йăлĕнчи (Хĕрлĕ Чутай р.) суккăрсен производствăлă ертелĕнче ĕçлекен суккăрсем „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕрентме кружок организацилерĕмĕр. Йăлсовет председателĕ Максимов йулташ кашни 5 кунтах пире виçĕ сехет хушши вĕрентет. Кружокра пурĕ 30 çын. Э татине вĕсем пурте йĕркелĕ çÿреççĕ.

В. Степанов.

Пневматически млатуксем илсе килнĕ

Чукунçул строительствинче çак кунсенче икĕ пневматически млатук илсе килнĕ. Кун пек млатуксене халичченех нихăçан строительствăра та усă курман. Сăнаса пăхнă тăрăх, пĕр сменăра 5 пин те 800 штук костыль çапма пулать.

Çак пневматически млатуксем тухичченех костыльсене алăпа 1 пин штук çапни тĕнчере чи пысăк рекорд шутланнă. Çак млатукпа пилĕк хут ытларах çапма пулать.

Ку млатуксене ĕçлеме компрессăр электричествă вăйĕ кирлĕ. Ку пирĕн строительствăра пур.

Пневматически млатуксемпе костыльсем çапас ĕçе пуçарса йама йăтарлаca орденоносец Чижов инженер килнĕ.

С. Прокопиев.

Йединоличниксене манса хăварнă

КАНАШ. Вырăскас Пихшихри „Мотор" колхозри бригадисенче тата йăтарласа организациленĕ крупноксенче „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" тимлесех вĕренеççĕ.

Апла пулсан та йединоличниксем суйлав Положенине вĕренес ĕçе хутшăнмаççĕ. Вĕсене суйлав саккунĕ çинчен йăлантарса паракансем çук. Ку йĕнпе йăлсовечĕ йединоличниксене манса хăварнă.

Медведев.

Толикин колхозник семйи 585 пăт тĕштырă илет

ТУТАРКАС. Кашмаш йăлсоветĕнчи „Ирĕклĕх" колхоз кăçал никăсанхи пек те мар вăйлă тырпул туса илчĕ. Колхозниксем пĕр-пĕринпе социализмăлă ăмăртса ĕçлесе, колхозри пур ĕçсене те вăхăтра туса пĕтерчĕç. Колхоз октăбĕрĕн 16-мĕшĕнче авăн çинче пĕтерес, тырлула шанчăклă кĕлетсене пуçтарса хучĕ. Госудăрствăлă умĕнчи обязательствăсене парса татнă.

Социализмăлă ĕçĕн результатĕ çине пăхсан кашни колхозник тулли кăмăлла хĕпĕртет. Акă çак куçенче ĕçкунĕ çине мĕн чухлĕ тулăш тивнине шутласа пăхрĕç. Пĕр ĕçкунĕ çине çур пăт тĕштырă тата кăштах укçа тухать. Хастарла колхозниксен семйисен 500 пăт таран тĕштырă илеççĕ. Акă Й. Толикин семйи 1.200 ĕçкунĕ тунă, вăл кăçал 585 пăт тĕштырă илет.

Колхозниксем хăйсен ытлашши тырринче государствăна сутса патефонсем, хуткупăссем т. ыт. илме, радио лартма шутлаççĕ.

К. Пушкин.

Вулакансен ыйтăвĕсем çине пана ответсем

ЫЙТУ:

— Кантонсенчи суйлаврa Франции коммунисĕсем хăшпĕр буржуалă партисенчен ытлах сасăсем илнĕ, анчах вĕсем мандатсене çав буржуалă партисенчен сахалрах илнĕ — мĕн пирки пулнă-ха вăл?

ОТВЕТ:

— Çак иртнĕ кунсенче Франципе вырăнсенчи самоуправлени органĕнчен суйлавĕсем — кантонсенчи суйлавсем тикеннисем пулса иртнĕ (кантон — Франципе чи кĕçĕн административлă йединицă). Суйлавсен вăхăтĕнче халăхăн фашисăма хирĕçле фронтне кĕрекен политикăла партисем чаплă çĕнтерĕ тунă, вĕсем департаментсен генеральнăй совечĕсенче (облăçсенчи тата округсенчи советсенчи) вырăнсенчен утмăл процентне йăхăн йышăннă. Коммунисем пысăк çитĕнÿ тунă, йулашки суйлавччен вĕсен 33 вырăн пулнă пулсан, халĕ вĕсем 107 вырăн кĕрешсе илнĕ.

Халăх фронтне хирĕç кĕрешĕрте тата, уйрăмах, коммунисене хирĕç кĕрешÿре буржуалă партисем çитĕрейменĕ. Анчах вĕсем, Франции реакцилĕ суйлав системи механикне пула, икĕ çĕр вырăн ытлашши илмĕ пултăрнă.

Коммунисен парти кантонсенчи суйлавра 1.090.352 сасă пухса (1931 çулта кантонсенче пулнă суйлавра 175.162 сасă пухни вырăнне), генеральнăй советниксен мандатне хĕрĕх те пĕрре илнĕ, çав вăхăтрах „рес.убликалă демократилĕ сойуз" текен парти, коммуниссен партинчен çĕр пин çеç ытларах сасă илнĕ пулин те, икĕ çĕр те хĕрĕх мандат илнĕ.

Мĕнле пулăт-ха вăл апла?

Ĕç ака мĕнре. Франципе кашни кантон, халăх хисепĕ кирек мĕн чухлĕ пулсан та, пĕр депутат суйлать. Франции центрти тата сурçĕр ĕнчи халăх нумай пурăнакан индустрилĕ кантонĕсем, — унта рабочисен партийĕсен тата чи малтанăх коммуниссен влийанийĕ чи пысăкрах, — Франции кăнтăрти халăх сахалрах пурăнакан йалхуçăлăхлĕ кантонĕсемпе, — унта капиталиссен, помещикисен тата кулаксен тĕрекĕ, — пĕр хисепех советниксем суйлаççĕ.

Парламента (депутатсен палатине) суйлама чухне те йăланах çавăн пек пулать. Франципи çавнашкал суйлав системине пула, промышленнăйлă районсем йăлсенчи районсенчен сахалрах депутатсем суйласа йăраççĕ.

Çавăн пек капиталисăмла суйлав системи, буржуазине ÿсăшăн — суйлав округĕсене пĕртан мар туса, сăмахпа пĕртăн текен суйлав правин пĕртанлăхне нимĕн хăварми пĕтерсе хураç.

Капиталисăмла çĕршывсенче ытти сене те çавнашкалах, а фашисем пуçпула тăракан çĕршывсем çинчен каламали те çук, унта террор алхасать, унта мĕнле те пулин демократин тĕсĕ те çук.

Совет çĕршывĕн суйлав системи çеç хула тата йал, рабочисем тата хресченсем пĕртан суйлан правине суйламала тăвать.

Социализмăла аслă державăн суйлав системи — пĕтĕм тĕнчере чи малта тăракан, чи демократилĕ суйлав системи пулса тăрать.

Агитатăрсем пурте ĕçе хутшăнман-ха

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун сывхăрса çитет. Çак вăхăтра Совет Сойузĕнчи ĕçхалăхăн активлăхĕ ниçханхинчен те вăйлăн ĕçсе пырать. „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕреннеси йулашки вăхăтра тата вăйлăрах сарăлса пыма пуçларç.

Канашри вагонсем йысакан заводра рабочисем, служăщисем, инженерсемпе техниксем тата килхуçи арăмĕсем суйлав положенине хаваслăн вĕреннеçĕç. Заводра суйлав положенине вĕренес тĕлĕпе пурĕ 44 кружок организациленĕ. Вăл кружокенче 1211 çын вĕреннеçĕç. Заводри партком рабочисене суйлав положенине вĕрентмо 86 агитатăр çирĕлтетĕ. Агитатăрсем хăйсен вĕсĕсене хисеплĕн туса пырççĕ. Пайăнки куна пулăмай агитатăрсемпе пропагандиссем 3—4-шер заданьăта туса иртеççĕ. Парти комитечĕ пропагандиссемпе агитатăрсене пухса 5 хутчен семинар туса иртерĕç.

Çав хушăрах çитменлĕхсем то çук темелe мар. Хăш-пĕр уйрăм коммуниссем хăйсен отвечăлăхне туйăмасçĕ. Парти комитечĕ завод начальникне Мокейева, строителствă начальникне Йуканин йулташсене рабочисен хушшинче кружок организацилесе, рабочисене суйлав положенине çинчен вĕрентмо хушнă. Анчах Мокейева Йăкуйни йулташсем ку тарана çитсе нимĕн те туман. Çавнашкалах парткомра çирĕлтенĕ пропагандиссем Димитрийев, Демьянков, Дубовый, Николайев йулташсем те заданьăсене туса иртермен.

Завод çумĕнчи комсомол комитечĕ суйлав положенине комсомолецемпе çыхăра тăман çамрăк рабочисем хушшинче вĕрентес тĕллĕпе 7 кружок организацинĕç, çав кружоксене пурĕ 109 çын йăнăçтарнă. Заводра пурĕ 150 комсомолец. Кунта ĕнтĕ нумай комсомолецсем вĕренĕ айăккинче тăрса йулни курăнать. Комсомол комитечĕ пур комсомолецене, çойузра тăман çамрăксене те вĕренĕ йăнăçтарассине нимĕн туман темелес.

Суйлав положенине вĕрентеси районра хăшпĕр вăйсенчелле, колхозенче те йăнăç пырать.

Катех йăлсоветĕнче суйлав положенине вĕренес тĕллĕпе кружоксем организацинĕç. Пуçламăш комсомол организацийĕ пропагандиссемпе агитатăрсем уйăрса çирĕлтенĕ. Анчах йăпăнки куна пĕр пропагандие, агитатăр та пĕр заданьăта туса иртермен.

Асхăри пуçламăш комсомол организацин комсоргĕ Федоров нимĕн те тумаст. Комсомолецсем хушшинче, савăн пекех колхозниксем хушшинче те суйлав положенине вĕренеси питтĕ йăпăх. Çапах та комсомол организацийĕ ĕçре татăклă улшăну тума шутламаст.

И. Малов.

Хуçасен Атăлĕпе совет Атăлĕ

Революцине хиртен Атăл çинче хуçасем алăкаса пурăннă. Ĕçхалăхĕ катăртăри пек ĕçленĕ. „Русь", „Надежда", „Меркурий" — çакăн пек йăнăравлă вывескăсемпе пĕрлешсе тăнă пароход хуçисем. Вĕсем çĕршер пин матроссене, грузчиксене тата ытти прависăр йулнă ĕççынниссене—атăл çынниссене пĕр хĕрхенмесĕр експлоатацинĕç. Капиталис-хуçасемшĕн çын мар, чĕре машинă, çурăм хыçне хурса йăпала турттаракан вылăх шуталнă грузчик революцине тинех питтĕ йăвăр пурнăçра пурăннă. Грузчик хулпуççи çине „кобылка" (йăпаласем хурса çĕклемели) тăхниччен малтан ĕçе илекенне темĕне пуç пулсан та çĕклеме прахăç мар пулса догăвăр çине ахă пусна. Ун чухне кашни тÿкĕн йăвăрăшĕ 10—16 пăт пулнă.

— Епĕр 11—12 пăтăй груз илеççĕ, — каласа парăт вăтă грузчик Шеронов йулташ.— Пĕрремĕш мана Царицынра 22 пăтăй груз çĕклеме тиврĕ. Ăна ман çурăм çине сакăр çын хурса пачĕç. Епĕ моски тăрăх хăпарна чухне ман ура пурнăк чĕрнисем ванса пĕтрĕç.

Грузчиксем пĕр канмали-кунсăр, пĕр сменăсăр талăкра 16—18 сехет ĕçлесе, хăйсен çурăмĕсем çинче куллен 400—500 шер пăт çĕкленнĕ. Ĕç укçи 40 пусран пуçласа пĕр тенке çитиччен çеç пулнă.

Совет аслă йăханнишĕн сăн-сăпаçĕ çуллен çулах улшăнса пырать. Тура Атăла пĕрремĕш пĕве пулсе лартрĕ. Нумай пуçласа пысăкран та пысăк Атăл—Мускав каналĕ ĕçе кĕчĕ. Атăл шывне 30 метр çÿлĕш хăпартакан, иккĕмĕш тата нумай пысăкрах, Куйбышеври пĕвене тавассине хатĕрленĕ ĕçĕсене туса çитерĕçĕç. Кунта тĕнчине чи хăватлă икĕ гидростанци пулать. Вĕсем иккĕшĕ пĕрле пилĕк Днепрогеспа таналлаççĕ.

Атăл грузсене вырăнтан вырăна турттарас тĕлĕшне йÿнĕ те аван çул пулса тăрать. Сталинла пăтатăлетăкĕсен çулĕсенче ку тараничен нихăçан курман грузсем—Саратовран совет комбайнĕсем, Горькинрен автомобилсем, Атăл тăрăхĕнчи ытти хуласенчен машинăсем тухрĕç.

Халь грузчикăн ĕçĕ хуçа валăн йăпала ĕçленĕ катăртăлă ĕçрен, пĕлĕт çĕр çинчен уйăрлса тăнă пекех, уйăрăлса тăрать. Совет организĕсем грузчиккĕн тăрашса, тÿссене 5 пăтран ытла туртмала мар тунă. Грузчик ĕçне машинăсем тăтăшах çăмăллатса пыраççĕ. Горькирти портра кашни кун 9—10 тонна пулакан грузпа кун 50—60 процентне механисăмла тийеççĕ. Тăвар, тырă тата ытти грузсене тийеçсе, пушшăтнă çĕрте етем вăйĕпе усă курмаççĕ. Йулашки вăхăтра груза трумсенчен хăпарт-мали платформăсемпе, груза трумсенчен тÿрех склада, йе складран трумсене илсе кайакан транспортерсемпе анлăн-уçă курасçĕ. Грузчиксем тийеес пушшатас ĕç техникине алла сăвăрса илсе, механисăма вĕренсе ситсе, пĕр-пĕринпе йăпатса нихăçан пулман ĕç тухăçлăхĕ параççĕ. Вĕсен ĕçĕ йăвăр та çăмăллă ĕçрен хисеплĕх, мухтавлăх, чаплăх тата геройлăх ĕçĕ пуçа тăчĕ.

Йарков, Шкилев, Далнаков тата ытти грузчиксем—халĕ Атăлăн йăтăлă сынĕсем. Вĕсене стахановла ĕç мухтава, кăларчĕ.

Социализмăла Атăлшăн кĕрешнĕ кĕрешÿре шыв çулĕ валăн йертсе пыракан работниксем ÿссе çитĕнчĕç. Пароходсен виççĕмĕшне тăватă-мĕш классенчи грузсемпе тултарса лартма тăвар та таса мар пулĕмсенче 20 çул кайăла çеç пассажирсен тĕп масси—рабочисем, айăкка кайса ĕçлекенсем, çĕнçĕре куçакан хресченсем пулнă. Пĕрремĕш класăн кайăтисенче çĕрулпучĕсем, фабрикантсем, хуçасем, „комерчески ĕçсемпе" йе Атăл тăрăх „уçăлса çÿреме", техникăскерсем, ĕçкĕ-çиккесем.

Халĕ Атăл пароходĕсемпе социализăм çĕршывĕн телейлĕ граждайĕсем усă курасçĕ. Атăл, тата ун çине йухса кĕрекен ытти йăханшывсем тăрăх çÿрекенсен хисепĕ революцинченхи виçерен тахçанах ĕнтĕ икĕ çут çурăран иртнĕ.

Атăл пароходĕсем халь йăлтах урăхла. Пароходсемпе теплоходсем çинче виççĕмĕшне тăватăмĕш классенче сывăрмали вырăнсем тунă; чылай пароходсем çинче виççĕмĕшне тăватăмĕш классенче уйăрăм кайăлăксем тунă, ачасем валăн йăтăрласа амăшне ача пÿлĕмĕсем уйăрнă. Пиншер ĕççынниссем хăйсен отпускине Атăл çинче иртерĕç; стахановла ĕç укçи вĕсене Атăл тăрăх пĕрремĕше иккĕмĕш классен чаплă кайăтисене çÿреме май парать.

Совет Атăлĕ пирĕн нумай мĕлйулă ĕçхалăхĕмĕн, вĕсен интересĕсемшĕн ĕçлет.

(ТАСС).

Çамрăксене вĕрентессинче те çитменлĕхсем нумай. Куславкка районĕнчи Кармăш шкулĕ 44-ачана шкул тулашне тăратса хăварнă. Куити учительсем партипе правительствă кăтартнисене пурăçласа пымаççĕ.

Учительсем йăлта чи куçтурлă çынсем пулмала. Вĕсен колхозниксене вĕрентес пулăшса пымала. Вĕсен йăлсенче хут пĕлменлĕхе пĕтермелe, трахом чирĕпе кĕрешмелe. Çав вăхăтрах Куславкка районĕнчи учительсем хушшинче трахомлисем те пур.

Н. М.

Йалти агитатăрсем

ЙĔЛЧĔК. ПСК(б)П райкомĕ çак кунсенче йалти агитатăрсене пухса, Сталинла Конституцине „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренме 5 кунлăх курс туса иртерĕç. Курсран 23 çын вĕренесе тухрĕç.

Курсра агитатăрсем çĕнĕ Конституцине тата суйлав Положенине тĕплĕн паллашрĕç, кашни статьине уйăрăм вĕренчĕç.

Кунсăр пуçне агитатăрсем хăйсен йăлсенче ĕçлеççĕ, Г. Иванов.

КАНАШ. Халăха Сталинла Конституцине „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени" çинчен йăлантарасса пама, партин Канаш райкомĕ октăбĕрĕн 14-мĕшне 18-ш хушшинче курсран 20 агитатăр вĕрентсе кăларса йăлсене салатрĕ. Октăбĕрĕн 20-мĕшĕнче тепĕр ушкăн пуçтарса вĕрентме тытăнчĕ.

Кунсăр пуçне агитатăрсем хатĕрленĕ Çĕнĕ Шелтем йăлĕнче курс уçнă. Унта йăлсенчен 33 агитатăр пуçтарăннă. Вĕсем октăбĕрĕн 28-мĕшне вĕренсе тухса йăлсене салланаççĕ.

„Аслă Совета суйланă кун тĕлне Конституцине суйлав Положенине пĕлмен çын районра пĕрре те пулмала мар" лозунгпа ĕçлеççĕ агитатăрсем.

Ив. Радиков.

Октябĕр революцин 20 çул тултарнă йатпа Парижра „Совет Союзĕ тусĕсен пĕтĕм тĕнчери тĕлпулувĕ“ пулнă

Октябĕрĕн 23 мĕшĕнче, Парижре, социалисăмла Аслă Октябĕр революцин 20 çулхи уйăвĕ йăчĕпе „Совет Союзĕ тусĕсен пĕтĕм тĕнчери питĕ чаплă тĕлпулувĕ“ пулнă. Тĕлпулура 25—30 пин ĕççыннисем пулнă. Унта Англирен 550 делегат, Голландирен 400 делегат, Париж горьăкĕсен делегацийĕ, Белгипе Китай делегацийĕсем, Франци çурçĕрти провинцисен делегацийĕ тата ытти те пынă.

Тĕлпулу питĕ пысăк çĕкленӳпе иртнĕ. Тĕлпулура пулнисем Совет Союзĕн çитĕнĕвĕсемпе пысăккăн хаваслăннине кăтартнă. Сăмах тухса келякан оратăрсем Совет Союзĕн халăхĕсемпе çулпуçĕсене аслă социалисăм çĕршывне мĕн пур майсемпех хута кĕме пулса шантарнă.

Тĕлпулува пуханнисем, минутă хушши шăпăн тăрса, Ленинпа, ССР Союзĕн вилнĕ борецĕсене тата унăн тусĕсене асăнса хисепленĕ.

Францири коммуниса партин ватă çулпуçĕ Марсел Кашен хăйĕн çулăмлă сăмахĕнче—Ленинпа Сталин хăваталăн Хĕрлĕ Çар туни питĕ тĕрĕс пулнине палăлă туни. Пролетари çулпуçĕсем пуласлăха гениленĕн курман пулсан, Совет Союзĕ тахçанах Китайпа Испани тӳснĕ пек тӳснĕ пулĕччĕ.

Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем Совет правительстви повишне пĕтĕмĕшпех ырлаççĕ, тата Совет Союзне шалтан çĕмĕрне тăракан тăшмансене пĕр хĕрхенӳсĕр пĕтернишĕн тавтăваççĕ, тенĕ Кашен.

Кашен сăмахне тăвăллăн алă çупнипе темиçе хутчен чарнă.

Испанири социалисла партин йăчĕпе сăмах туханă Мадрид хула совечĕн председателĕ Хосе Лопес республикăлă Испани ССР Союзĕпе тусла пулни çинчен калаçă.

Китай делегацин представителĕ Чен полковник Совет Союзĕн çитĕнӳвĕсене саламласа: ССР Союзĕ пĕтĕм тĕнчери лăпкă саманан тĕрекĕ пулса тăрать, тенĕ.

Тĕлпулу ССР Союзĕн Ĕçтăваканĕн Тĕп Комитет председателĕ Калинини йулташ патне йăма хатĕрленĕ саламлă адрес текстине йышăннипе пĕтнĕ. (ТАСС).

Сăмăрле комбинатĕнчи гнутарлăй цехри стахановка Чернова йулташ.

Кăнтăр-Хĕвелтухăçри кривоносцăсен чаплă çитĕнӳвĕ

ВОРОНЕЖ, октябĕрĕн 25-мĕш (ТАСС). Кăнтăр-Хĕвелтухăçри ӳкерӳçсен çинчи Ғрăвăпкин хăрăмĕнчи дивизичĕн Стебелев пулăшăн тата машинистсем Сильницкине Илйичев йулташсем октябрь умĕнхи ăмăртура кривоносла йĕрĕн чапла ӗçлесе пăтăртаççĕ. Вĕсем Ғрăвăп-Мичуринск участкинче „ФД“ паровозпа графика тăрăх виçĕ тур тумала ирттерсе, ултăшар тур тăваççĕ. Çак орлăт майпе Ғрăвăпкин ухрăмĕ паровозсен çапăрлăшĕн çĕнĕ графикпе тӳсе хатĕрлет. Ку графикпа пурнăçа кĕртсен, чылай машинăсене заплаçа тăратма май пулăт.

Кĕр тыррисене 34 мĕлйун та 585 пин гектар çине акнă

Октябĕрĕн 20-мĕшне Совет Союзĕнче кĕр тыррисене 34 мĕлйун та 585 пин гектар çине акнă. Государствăн акă планне 93 процент тăвăпăр. Октябрьпе 20-мĕшĕнче кĕрхи çĕртмене 32 мĕлйун та 964 пин гектар сухалăха планă 47 процент пурнăçа кĕртнĕ.

Кĕрхи çĕртмене сухаласа ӳкрăмăх Çĕпĕрте, Краснойаркине Алтай крайĕсенче, Хĕвелтухăр Çĕпĕр. Архангельск тата Вологодски облăçĕнче çителĕкĕр пырать. Вĕсем хаçат кĕрхи çĕртме çухалăх планă çуррине те пурнăçа кĕртмен. Кĕрхи çĕртме тăвас планă Украинăн, Крым, Краснодар. Орджоникидзе крайĕсем тата Ростов облăçĕ начар пурнăçа кĕртнĕçĕ. (ТАСС).

Совет Союзĕ тăрах

* 908 мĕлйун тенкĕ пособи. Пĕрлĕн сĕршывра ĕçсыннисем пумай ачалă пинпер семйисем пацалăхран пособи илесе тăраççĕ. СССР Союзĕн Финанс халăх комиссарĕнче пĕтĕмлĕй тăрăх, аборт тума чарасси çинчен декрет тухнăранпа, пумай ачалă ача амăшĕсене пурĕ 908 мĕлйун тенкĕлех пособи панă.

* Ахăлăпи колхозсемпе совхозсенче машинăсемпе лимонсем пухма пуçланă. „Пемирка“ совхоз ялăнчи 5 мĕлйун машăрти тата 10 пин лимон пухса илет. Кашни тĕмĕрех пин машăрпинчен кайа мар тухăт.

* Колхозниксем валăри таварсем. Пушан пурнăçа колхозлăй пăл промышленнăй туса кăларакан таварсене илесси пинпе пиçаккăн ӳссе пырат. Сакăа шута илсе Центросоюза йăла-тавар кӳрессине чылай ӳстерме палăртнă. IV-мĕш кварталта йăла çĕлемĕн пуçма-тавăрсем III-мĕш кварталтинчен 36 проц. ытларах, çĕлем тумтирсем — 28 проц., трикотаж — 38 проц., сăран ватă-пушмак — 22 проц., йĕтĕрен тунă пуçма-тавăрсем — 33 проц. ытларах йăмала тунă, тата ыт. те. Йăла продовольстви таварсем пăрачĕ те пумай ӳсет.

Герой шăлăмĕсем. Иртнĕ çулта совет çĕрĕ çине тапăннă вăйлă-маншăн отряднине сăпăçса паттăрсен ячĕпе Семен Лагода вилнĕ. Унăн вăрăнне — шăлне, Куйбышев облăçĕнчи Искалински МТС комбайнерĕ Иван Лагода йышăннă. Кăçал Семен Лагодăн ывăлĕпе шăлне—Дмитрий Лагода хăй мăнкĕне Хĕрлĕ çара кайма ыйтнă. Оборона халăх комиссарĕ Совет Союзĕн маршалĕ К. Е. Ворошилов, вăл ыйтнине килĕшсе ăна Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йăлавда Ӳĕрăм çара йăмала тунă.

* Мускав—Атăл каналĕн ӳлочĕ каналĕ ĕçе йăнăраннпа октябрĕн 15-мĕшĕнех 100 пин пассажир тата 300 пин тонн груз турттарнă.

* Октябрĕн 25-мĕшĕнче ирхине „Сурçĕр полъусĕ“ станцинче 31 градус сивве пулнă. Çанталăк уйăр та, тӳлек пулнă.

* Владивостокран Мускава пуçă тинĕсĕ вунпĕр естафетăпа лопăс тухассĕ. Вăл пойăссене октябрĕн умĕнхи ăмăртура мала тухнă—крыловецăн машинисчĕсем, аслă кондукторсем, лопăс мастăрĕсем т. ыт. Йĕртсе пырассĕр.

* Колхозсем кăшман плантацинченех 156,7 мĕлйун центнер сахăр кăшманĕ кăларнă. Кăшман кăларас планă 85 процент, иртнĕ çулта çак вăхăта кăларинчен икĕ хут ытларах пурнăçа кĕртнĕ.

* Мускав хулин Сталин суйлав округĕнчи предприйатисен рабочийĕсем—суйлав кунне—декабрĕрен 12-мĕшне 1937 сухăн промфиплана срочныех тултарнипе кĕтсе илме йышăннă.

* Пĕтĕм Донбасри стахановсен сăмăхĕнчен делегачĕ „Кочегарка“ шахтин пĕрремĕш клас мастăрĕ Макоцко Василий октябрĕрен 25-мĕшĕнче пĕр сменăра вуна норма тултарнă.

* Октябрĕрен 30-мĕшне Совет Союзĕнче сĕрмăмăшне пухса кĕрес планă 59,2 процент тултарнă. Çĕр мамăкне пухса кĕрес ĕçре Узбек ССР, Туркмени, Украина тата Орджоникидзе крайĕ йăхса пыраççĕ.

(ТАСС).

Çĕнĕ йышши йăлхуçалăх машинисем

РОСТОВ-ДОН, октябрĕн 25-мĕ (ТАСС). Ростоври Сталин ячĕпе тăракан йăлхуçалăх машинисем тăвакан завод аслă пролетари революцийĕ сирĕм çул тултарнă уйăва сывхарăн май çĕнĕ машинăсем тусса хатĕрлет. Ситес кунсенчех çĕнĕ типĕлă сеялкăсем тума тытăнаççĕ. Вăл завод тунă малтанхи сеялкăсенчен авантажах, унăн пĕр кĕмĕртен рама çине тунă. Унăн сошникĕсем ытти сеялкăсенчен ӳкиртре салатса пухма-ваннине тата аван йĕркеленине уйăрăлса тăраççĕ. Сеялкăн çăмăл конструкцине автомат шут.

Çавшăкалах тата аван тĕплă дискăлă трактăр сӳри çуна-каларна хатĕрленесçĕ. Хальхи дискăла çӳресене ĕоат çинче тунă. Çĕнĕ сӳрене пĕтĕмĕшпех шăратса тăваççĕ.

Аннăн илекен „ШК-3“ утă çумалли машинă тума ĕçлĕ чертежсем хатĕрлесçĕ. Вăл машинăн çĕклентермели рычажĕ пиçĕ-лапăс тата „ШК-2“ утă çумалли машинăнчен пумай çăмăл.

Октябрĕр революцин 20 çул тултарнă уйăв тĕлне „Красный Аксай“ завод пумай çĕнĕ йăлхуçалăх машинисене испытани тӳсе пĕтерет.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командирĕсене, политработниксене, инженерсемпе техникĕсене орденсемпе наградăланă

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн пĕрлешӳвĕсене, чăсĕсемпе подразделенийĕсене çар ĕçне, политикăна тата техникăна вĕрентесе хатĕрлес тĕлĕшпе калама çук чаплă çитĕнӳсем тунăшăн, ССР Союза Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ командирсене, политработниксене тата инженерсене орденсемпе наградăлама йышăннă: Ленин орденĕпе—12 сынна, Хĕрлĕ Йалав орденĕпе—53 сынна тата Хĕрлĕ Çалтăр орденĕпе—8 сынна награддăлана.

Оборонă промышленнăç работникĕсене орденсемпе награддăланă

Оборонă промышленнăç ĕçĕнче калама çук чаплă çитĕнӳсем тупăшăн, ССР Союз Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ 4 сынна Ленин орденĕпе, 13 сынна Хĕрлĕ Çалтăр орденĕпе тата 7 сынна Знак Почета орденĕпе наградăлама йышăннă.

Иван Алексейевич Каблуков академика Ес Хĕрлĕ Йалав орденĕн парса парнеленĕ

ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Иван Алексейевич Каблуков академика Ес Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса парнелеме йышăннă. (ТАСС).

Пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен сойузĕн республикăри конференцийĕ

Октябрĕрĕн 21 — 26-мĕшĕнче Шупашкарта пуçламăш тата вăтам шкулсенчи работникĕсен профессиăл сойузĕн республикăри пĕрремĕш конференцийĕ пулса иртрĕ.

Конференцин кун йĕркинче çакăн пек ыйтусем пулнă: Чăваш республикинчи профессиăл сойузăн обкомĕн тата ревизи комиссин отчотăпа докладне итлеси тата суйлавсем.

Малтанхи докладпа çак сойузăн облăк комитечĕн председателĕ Владимиров йулташ доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче халăх тăшманĕсем Ихахатов, Памеков тата Хĕрлĕ Чутай районĕнчи вăтам шкулти Игнатиев профсойуз организацине хĕсĕнче кĕрсе, вĕсем сăтăрах ĕçлеми тунăн çинчен сăмăлтăрах ирттерсе кайрĕ.

Вăл хăйĕн докладĕнче: епĕр халăх тăшманĕсене шкулсенчен хăваласа кăларас пирки çĕлемĕн мар, ĕçленĕ тесе, конференцине ĕнентерлесшĕн пулчĕ. Анчах фактсем урăхлине кăтартаççĕ.

Докладран конференцине килнĕ делегатсем профсойуз хуçалăхĕ 6 çул хушшинче мĕнле тăнине пĕлеймерĕç, профсойуз райкомĕсен лайăх опычĕсеме палламаймарĕç. Тĕрĕссине каласан, доклад начар пулчĕ.

Пренире 50 çын ытла туханă калаçрĕç. Туханă калаçаканăн йулташсенчен пумайĕшĕ—шкулсене халăх тăшманĕсен чирĕр ĕçĕсен йулашкийĕсене пăтереççи çинчен калаçрĕç.

— Иетĕрпери педучилищăра Агаков преподаватĕл чăваш халăхĕнчен мăнкăласа сӳпĕлтетсе сӳренĕ. Çавăн пирки выраç ачисемпе чăваш ачисем хушшинче час-часах хирĕçӳсем пулса иртрĕç,—тет Силуганов йулташ.

— Шăмăрпă районĕнчи сутĕç пайĕнче Крылов троцкис ĕçленĕ. Районти аттестаци вăхăтĕнче вăл хăйĕн тăванĕсене шкулсене лартса тухиĕ. Шкул работникĕсен профсойуз комитечĕ унăн ĕçĕне пачах интереслемен,—терĕ Петров йулташ.

Канашри педучилищăра халăх тăшманĕсен йăви-пуçиĕ. Профсойуз комитечĕ вĕсемпе кĕрешес тĕлĕшпе пачах ĕçлемен, хăйĕн йухăнкĕнпе вĕсене пуçлăша шыпă.

Йĕпрес районĕнчи профсойуз комитечĕн председателĕ Захаров пуçарнине учительсем-расписисем туса ещех ĕçсе çуçрĕç. Захарова районри ĕçсен ĕçлаçри Ларсан, Владимиров ăна чукунçăл çинче ĕçлеме вырнаçтарнă.

Профсойуз Обкомĕ демократине пăсакансемпе кĕрешес-пирас вырăнне хăй пăсса пыпă. Президиумпа пленум членĕсенче кооптани йĕркине кĕртнĕ сăнсем ĕçленĕ.

Пуçламăшпе вăтам шкулсенчи работниксен-профессиăлĕ сойузăн чылай членĕсем политикăла-массăлă ĕçрен кайа тăрса пуçнă. Вĕсем хаçат-журналсем вулламаççĕ.

Конференци тата ревизи комиссин 6 сухăн отчотне итлерĕ. Ревизи комиссинĕ 6 çул хушшинче профсойуз хуçалăхне çителĕкĕ тĕрĕлеесе тăман.

Прени пĕтнĕ хыççăн ЧАССР Çутĕç халăх комиссарĕ Осипов йулташ, учительсем хăйсен пĕлӳне мĕнле хăнартасси, çĕлĕ сӳлăк-çинчен массăна мĕнле йăнлантарасси тата учительсен речĕ тасалăкĕшĕн кĕрешесси çинчен доклад туса пачĕ.

Кун хыççăн конференци çĕнĕ пленум составне 21 член, 5 кандидат, ревизи комиссине 5 çын суйларĕ. Вăтам шкулсемпе пуçламăш шкулсен профсойуз обкомĕн ĕçĕсем пĕрремĕш Пĕтĕм Сойузри сĕнсене кайма 4 делегат суйласа хăварчĕ.

Н. Михейев.

ТЕМТЕПĔР

Сайра тĕл пуланăн белугă

Молотов ячĕпе тăракан колхозри пуласа Степанов (Иванчук йале) Рыкушински осередок районĕнче питĕ пысăк белугă тытнă. Белугă 5 центнер ытла тайăл, тăршшĕ унăн 4 метр та 30 сантиметр пулнă. Степанов йулташ çак белугăшăн 900 тенкĕ илнĕ.

(„Сталинградская правда“).

★ ✪ ★

Чĕре кăнăрăн сылтăм йенче

Владивостокри хула больницин врачĕ И. И. Коврижных вилнĕ сынна касса пăхнă хыççăн, медицинăрă питĕ сайра тĕл лулакан йапала курнă. Вăл сынăн ылăлти органĕсем пурте урăх вырăнсенче пулнă. Чĕрипе вачĕ кăкăрăн сылтăм йенче, пĕвĕрĕ—сулахай йенче. Ушке пайĕсем те уяпах вырнаçнă: сулахай йенчи пайĕ сылтăм йенче, сылтăм йенчи пайĕ—сулахай йенче. Ăшри органсем сакăнпек уçăлăнса ларни вĕсен функцийĕсене пăсман. Пураннă вăхăтра вăл çын лайăх сывлăхлă пулнă.

(„Красное знамя“).

★ ✪ ★

Çĕнĕ микроскоп

Киеври ĕç гигиени институтĕнчи аспирант М. В. Лейник çĕнĕ микроскоп тунă. Çĕнĕ микроскоп 5—7 пин хут пысăклатса кăтартать. Халь усă кураканăн микроскопсем 3 пин хут пысăклатса кăтартаççĕ. Опыт туса пăхнăран биологсем, гигиенистсем тата патологсем çĕнĕ микроскопăн пысăк усăлăлă йенĕсене палăртнă.

М. В. Лейник тата пысăкрах кăтартакан микроскоп тăвас тĕлĕппе ĕçлет. Вăл шутласа кăларнă тăрăх 30—40 пин хут пысăклатакан микроскоп тума май пур.

Лейник йулташ—Украинăри çамрăк аслăлăх работникĕ, парти членĕ, Житомир облăçĕнчи Чудновски районри колхозник ывăлĕ. Вăл 1908 çулта çуралнă, 1936 çулта Киеври медицинăн институтĕнчен вĕренсе тухнă.

(„Правда“).

ШАХМĂТ

Ботвинник — Левенфиш матчĕ

ССР Сойузĕнче малти вырăна тухаçсене пыракан Ботвинникпа Левенфиш хушшинчи шахмăт матчĕн октябрĕн 25-мĕшĕнче вылăса пĕтернĕ таххăрĕмĕш партийĕ никам та çĕнтерейменнине пĕтнĕ.

Матч 4:2 шутпа Ботвинник çĕнтернипе малала пырат. Матчăн вуннăмĕш партине октябрĕн 28-мĕшĕнче Ленинградра вылăссĕ.

(ТАСС).

Алехин—Ейве матчĕ

АМСТЕРДАМ, октябрĕн 26-мĕш (ТАСС). Ейвепе Алехин хушшинчи шахмăт матчĕн çирĕп ĕçлесе иртнĕ тăваттăмĕш партийĕ ход тунă хыççăн урăх вăхăта куçарнă таххăрĕмĕш партийĕ никам çĕнтерейменнине пĕтнĕ.

Матч 4:2 шутпа Алехин çĕнтернипе малала тăсăлат.

Студентсен турнирĕ

Коммунисла йалхуçалăх аслă шкулта вĕренекен студентсем хушшинче шахмăт турнирĕ пулса иртрĕ. Турнирта пĕтĕмпе 14 студент выльăрĕç. Пĕрремĕш курсри студентсем—Масаев, Йăруков та Дерновский йулташсем мала тухрĕç. Çак йулташсем „Колос“ физкультура обшествин иртерекен республикăри шахмăт турнирĕнче выльăссĕç.

А. Парамонов.

Пăшал перекенсен ăмăртувĕ

Осоавиахимăн хула совечĕпе ворошиловла стрелоксен клубĕ Октябрĕрти Аслă Социалисăмлă революцин 20 çул тултарнă уйăв йăчĕпе Шупашкар хулинче пăшал перекенсен ăмăртуве туса иртерессĕ. Ăмăрту октябрĕрĕн 30-мĕшĕнче тата нойабрĕрĕн 1-мĕшне 6-мĕшĕнче пулать.

Ăмăрту командинче 5 çын пулмалă. Кашни пуçлăмăш организаци ăмăртува темиçе команда та тăратма пултарать. Пĕчĕк организацире командă тума çын çитмест пулсан, икĕ организаци пĕрлешсе сборнăй команда тăратма пултараççĕ.

Пăшал перекенсен ăмăртуне иртерĕ Осоавиахим хула совечĕ çумĕнче 6 çынтан комисси уйăрнă.

Осоавиахим пуçламăш организацисенче çак ăмăртува халех-хатĕрленме пуçламалла.

Кольцовкăри колхоз макет çинче

Чăваш художникĕсен Союзĕн членĕ А. В. Тараканов художник çак куншенче хăйăтпа питĕ интереслă ĕçе пĕтерет.

Тараканов йулташ çак çура Кольцовкăри (Вăрнар р.) Сталин ячĕпе тăракан колхозра пулнă. Колхозăн çĕнĕ сурт-йĕрĕсене, куĕтурă вырăнĕсене мĕнле ларна çаплине халăха кăтартас тесе задач лартнă художник.

Халĕ çав колхоз çурчĕсем пĕр ватăмрах вĕтĕл пек фанер хăми çинче лара-ларă тухнă. Акă клуб, шкул, электростанци, йăлсовечĕ... Унта-кунта телефон... Çуртсем, будкăсем.

Çак макет çине пăхсан, Вăрнар районне каймасăрах Кольцовкара пулса килетĕн.

И. М.

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунĕн“ 243-мĕш номерĕнче малтанхи страницăра ЧАССР Тĕнче тăвакăй Национальăйĕсен Советне суйлас тĕлĕппе ĕçленĕ Чăваш АССР Суйлав Комиссин составне çирĕплетесси çинчен йышăннă постановлениере — суйлав комиссин членĕ—Шупашкар хулинчи Коммунисла организацийĕнчен — Перлова Лидумила Ивановна тесе вуламала.

Тата 239-мĕш номĕрте малтанхи страницăра Сойуз Советне суйлас тĕлĕпне ĕçленĕ Округсенчи Суйлав Комиссин составне çирĕплетесси çинчен йышăннă постановлениере Шупашкар Округ Суйлав Комиссин председателĕ Каплин Александр Семенович; Улатăр Округĕнчи Суйлав Комиссин членĕ — ССР Сойузĕн Оборонине тата Авиацине Хими строительстине пулăшакан Обществăн (Осоавиахим) Шăнкăрти районĕнчи организацинчен—Валеева Туктамыш Фахрутдиновна тесе вуламала.

Пулни-иртнисем

ХУЛИГАНСЕН ТИСКЕР ЕÇĔ. Кĕçĕн Кармал йалĕнчи хулигансем: Александр Керимов, Павел Волков тата пуп ывăлĕ Андрей, Федор Маçăкшăнни призывниксене вĕлерес тесе, октябрĕрĕн 17-мĕшĕнче çĕрле урамра сыхласа тăнă. Николай Волков урампа иртсе пынă чухне хулигансем ун çине тапăннă та, Маçăкшăни тесе палламасăр темиçе çĕртен çĕçĕне чиксе вăйăр амантнă. Николай Волков халăх вăхăтра боçьницăра выртат. Ĕçе тĕрĕслеççĕ.

Ответлă редактăр П. И. ИВАНОВ.

Чăваш республикăнчи „Спотара“ кантурине

Бухгалтĕр-ревизор. Расчот сĕтелĕн бухгалтĕрĕ кирлĕ.

Йĕпрерĕн „Спотара“ заводне

Технически директăр КИРЛĔ.

Çак адрĕсене ыйтмалă: Шупашкар, Красноармейскайа урамĕ, 5-мĕш № çурт „Спотара“.

Шупашкар Торга

КИРЛĔ:

Магазинсенче, ларĕоксенче ĕçлеме

продавецсем

тата булкă таврашшсем, кондитерля, шăрăмăрилĕ тата галантерилĕ таварсене сутса çӳреме

лотошникисем

Найăбрĕрĕн 7-мĕшĕнче тата 8-мĕшĕнче пулăкан вечерсенче сутма

вăхăтлăх лотошникисем

Директи.

ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕТНЕ

Аслă бухгалтĕр КИРЛĔ.

Условисем: Ĕç укçи 500 тенкĕ, хватер пур.

Çак адрĕсене ыйтмалă: Горфо, ул. Кадыкова, 17.

Хула Совечĕ.

Бухгалтĕр кирлĕ

Сыхăну çурчĕ, Сойузпинчен Республикăри уйăрмне пымала.

Атăл тăрăх килекен грузсене илекенсене

Шыв çулĕ хупăнас вăхăт сывхарса килнĕ май тачка пристăвĕре тӳрлеем пумай пухăнă пирки

Атăл тăрăх килекен грузене илекенсен

пристăне килсен

виçĕ кун хушшинче тӳлеесе илсе турттарса тухмăпа.

Асăннă срукра тӳлеесе илсе турттарса тухмасан йышăнман груз тесе шутланат, вара унашкал груза сутма парассĕ.

8—2. Пристăнь.

- ШУПАШКАРТИ „БАКАЛЕЙА“ МАГАЗИНĔ

Октябрĕр уйăвĕ тĕлне

Ачасене валăçи

Парнесем хатĕрлеме заказсем йышăнат.

Парвесене йăури хатĕрленĕ пакетсем йăшĕ конфетсем, пĕрекĕсем, печенĕсем тата шоколадсем тултарса тăваççĕ.

Пакетсем йăшĕ тултарса хатĕрленĕ парнесен хакĕ 3 тенкĕрен пуçласа 15 тенкĕ таран пулат.

3—1. ДИРЕКЦИ.

Чăваш Аптекă Управлени

хăйĕн системинче ĕçлеме аптекă пуçлăхĕсене, ларĕок пуçлăхĕсене тата продавецсене хатĕрлеме

Шупашкарта 3 уйăхлăх курс организацилет.

Курса—вăтам шкулсенче 5 класран кайа мар чухлĕ вĕренипе килеççĕ.

Курсра вĕрентĕхе хыççăн районсенче ĕçлеме пăраççĕ. Вĕренĕ чух производствăран уйăрăлмала пулăт.

Заявленисене çак адрĕсене памала:

Шупашкар, Аптечнайа урамĕ, 6. Аптекă Управлени.

„Чăваш Коммунĕ“ сыр̆ăнсе илмели хăнсем: 12 уйăха — 30 т., 6 уйăха — 15 т., 3 уйăха — 7 т. 50 пус 1 уйăха — 2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченнăй Чувашиздатăпăн № 812. Гер. Чебоксары, типографин № 1 Чувашполиграфтрестĕ. Заказ № 1925. Тираж 11186. ф. 58 — 92 см. 1 — 1п. л.